# ХУРАТНĂ КĔМĔЛ

Юнашарах иккен тĕнчен
Хĕвел кулли те хĕл куҫҫулĕ...
Ăҫта раскать юр айĕнчен
Хуратнă кĕмĕл пек шыв ҫулĕ?

Пуласлăх ăнтăлать мала
Мăн улăхри юпах тиха пек.
Ҫамрăклатан шанчăкпала
Ҫурхи куна чупса тухап эп.

Ҫӳрет пек умăмрах вĕҫсе
Хавхалану — хама виҫеллĕ.
Тавах. Ăнаҫҫĕ-ха ĕҫсем,
Паян ак сывлăх та йĕркеллĕ.

Тата мĕн кирлĕ тĕнчерен? —
Сăлтавĕ пур-мĕн савăнмалăх.
Анчах мĕскершĕн каҫсерен
Чуна шăнтать ҫурхи ҫанталăк?..

*Исмуков, Н. А. Хуратнă кĕмĕл : [сăвă] // Исмуков, Н. А. Ҫăлри ҫăлтăрсем = Звезды в кладезе : [сăвăсем] / Н. Исмуков. – 2-мĕш хушса кăларнă кăларăм. – Шупашкар, 2011. – С. 182.*